26-60

В. И. КРАСНОВ

# ВИҪĔ РĔВОЛУТСИ



ШУПАШКАР * Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ * 1926 ÇУЛ

В. И. КРАСНОВ

# ВИҪӖ РЕВОЛЮТСИ

ШУПАШКАР
ҪӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
1926

Чебоксары. Типография
Школы Ф. З. У. при Чуваш-
— госиздате —
Чувашлит № 462. Зак. № 162.
— Напеч. 6000 экз.

# УМСĂМАХ.

Ку кĕнекене, Октăпĕр револютсийĕ, ĕçлекенсемпе хресченсем алла-аллăн тытăшса хура йунлă капитталисăма çĕмĕрни 8 çул тултарнине асăнса „Канаш“ ретаксинчи шурналиссем, тата типпокрафинче ĕçлекенсем хушшинче тунă токлата, автăр вăрăмлатса çырнă.

Ку кĕнекере кăлтăкĕсем те пулĕç, çапах та йулташсем тимлесе ыйтнипе, тата хамăр чăваш халăхне, пуринчен ытла çамрăксене, çак иртнĕ вăрăм ĕç халăхĕн, Октăпĕр револютси хапхи патне илсе пыракан йунлă çулĕ çинчен, кĕскен каласа та пулин тăнлантарнин усси пулĕ тесе, автăр кĕнекене кăларма килĕшнĕ.

Пуринчен ытла хал йалта ӳсекен çамрăк йулташсене, комсомолĕссене, револютси историне вĕренес ĕçре, çак кĕнеке пулăшассине автăр шанса тăрат.

Автăр.

## Хресђенсен револђутсиђенхи пурнăçĕ.

1917-мĕш çулти револђутсиђен хресђенсен пурнăçĕ питĕ нађар пулнă. Вĕсен прависем ытти классен прависем çумĕнђе питĕ пĕђĕккĕ, питĕ хĕсĕк пулнă. Хресђен йал опђĕстви йамасан урăх çĕре куçма та пултарайман. Сут тăвас пулсан та, вĕсене ытти çынсене сут тунă çĕрте мар, йе вулăсри сутра, йе çемски нађалђник патĕнђе сут тунă, хресђенсене роскăпа анђах хĕненĕ. Пĕр сăмахпа каласан, хресђенсене улпутсем, пуринђен ытла вак натсисене, ђăвашсене, çын вырăнне те хуман.

Пуринђен ытларах хресђенсем улпутсене пăхăнса тăнăран темĕн ђухлĕ хурлăх курнă. 1861-мĕш çулта капитталиссене пушă, йўнĕ, алăсем парас тĕлĕшпе хресђенсене „ирĕклĕхе кăларнăран“ вара пушшех пурăнма хĕн пулнă. Хресђенсем ĕмĕртен ĕçлесе пурăннă çĕрсене, ђи лайăххисене улпутсем хăйсем 22 мĕлйун теçеттинă касса туртса илнĕ. Çав касăксене пĕр кĕтессе мар, хресђенсен çĕрĕсем хушшисенђе тата-тата сапаланђăк касса илнĕ. Апла

туни хресҁенсене пушшех кансӗр пулнӑ: улпутсен ҫӗрӗсем ҫине хресҁенсен выҁӑхсем кӗрсе кайсан та, вӗсене хупса хресҁенсене штраф тӳлеттернӗ, йе тата хресҁенсен выҁӑх кӗтӳне улпут ҫӗр урлӑ каҫарса каймалла пулнӑшӑн улпута тӳлемелле пулнӑ. Тата хресҁенсен ҫӗр ҫитмен пирки, улпутран ҫӗре тара хаклӑ хакпа илмелле пулнӑ. Хресҁенсен ирӗксӗрех улпут аллине кайса хӗсӗнмелле пулнӑ. Тата тӗрлӗрен куланайсем, налуксем хресҁен ҁухӑн пурнӑҫне татах та наҁарлатса тӑнӑ.

Ҫакӑн пек пурнӑҫ хресҁенсене улпутсемпе кӗрешме хушнӑ. Хресҁенсем ҫӗре улпут аллинҁен илмесен хӑйсен пурнӑҫне ҫӑмӑллатма ҫуккине ӑнланнӑ. Ҫавӑнпа вӗсем улпутсене хирӗҫ восстанисем тума тытӑннӑ. Анҁах лайӑх орканисатсиленме пӗлмен пирки, вӗсене патша ҫарӗсем ҁасах лӑплантарнӑ. Политси вара хресҁенсене хӗнесе амантса, ҁӑлахлантарса пӗтернӗ. Нумайӗшне тӗрмесенҁе, Ҫӗпӗрте ҫӗртнӗ.

## Ӗҫлекенсен пурнӑҫӗ.

Ҫак вӑхӑтрах промышлӗннӑҫ вӑйлӑланнӑ пирки ӗҫлекенсен класӗ те йышлӑланса, вӑйлӑланса пынӑ. Капитталиссем ӗҫлекенсене хӗстерсе тӑнӑ, вӗсене 14—16-шар сехет пӗр канмасӑр

ĕçлеттерсе, çемйисене тăранмаллăх та укçа паман. Малтанах вĕсем патшан ђиновникĕсенђен, тĕрлĕрен нађалниксенђен капитталиссем хĕстернинђен, çăлăнăçпа пулăшу шыранă. Анђах патша та капитталиссемпе пĕр майлă пирки пулăшу ниăçтан та тупайман. Çапла ĕçлекенсем те хăйсен пурнăçне çăмăллатас пирки никам çине те шанма çуккине, хăйсемшĕн хăйсем тăрăшмаллине сиснĕ.

## Ĕçлекенсемпе хресђенсен тăшманĕсем.

Ĕçхалăхĕн тăшманĕсем нумай пулнă. Çĕр улпуђĕсем те хресђенсем çĕре туртса илессине сиссе, капитталиссем те хапрăк-савăтсене ĕçхалăхĕ хăй аллине илессине сиссе, панкирсем те капиттала хăйсем çеç сыхласа тăрас çуккине сиссе патша майлă пулса тăнă. Йалти кулаксем те, пупсем те револђутси пулсан хăйсене мĕн пулассине сиссе, патша влаçне хытă сыхласа тăнă. Вĕсем пурте хăшĕ нухайкăпа, хăшĕ укçапа, хăшĕ ђейелĕхпе патшана сыхланă.

Йалта хресђенсем улпутсемпе кĕрешнĕ, хулара ĕçлекенсем капитталиссемпе кĕрешнĕ. Анђах улпутсемпе капитталиссене сыхлама, ĕçле-

кенсемпе хресђенсене хĕстерме патша тĕрмесем туса, шантарсемпе, страшниксемпе, шпионсемпе ĕçленĕ. Çак йапалана ĕçлекенсем сиссе, патшана хирĕç çапăçма кирлине ăнланса илнĕ. Анђах патшана улпутсем хута кĕрсе тăнă, çавăнпа ĕçлекенсен улпутсемпе те çапăçмалла пулнă. Çапла ĕçлекенсемпе хресђенсен интересĕсем пĕрлешсе тăнă. 1905-мĕш çулти револђутси умĕн ĕçлекенсем патшапа çине тăрса кĕрешме пуçланă. Вĕсем урама тухса „долой самодержавие“ тесе кăшкăрнă вăхăтра Ленин йулташ хăйĕн «Йалти ђухăнсем патне“ йатлă кĕнекинђе (т. IX) ак çапла çырнă: ĕçлекен халăх хуласенђе, урам тăрăх çухăрса иртмешкĕн анђах мар, йулашки аслă татăклă çапăçу памáшкăн çĕкленес кун çитесси çывăх. Ун ђухне пурте пĕр саспа: епĕр йе кĕрешӳре вилĕпĕр, йе ирĕклĕхе кĕрешсе илĕпĕр, вара кĕрешӳре çĕршерĕн вилнисем вырăнне, пиншерĕн çĕнĕ хастар паттăрсем тăрса пырĕç. Ун ђухне хресђенсем те çĕкленĕç, вĕсем пĕтĕм Раççейĕпе çĕкленсе ĕçлекенсемпе хресђенсен ирĕкĕшĕн çапăçма кайĕç. Нимĕнле патша пулккисем те (çарĕсем) вĕсене хирĕç ђăтса тăрaймĕç. Ĕçлекен халăх çĕнтерсе, пĕтĕм ĕçхалăхне

ђуралăхран хăтарас аслă, сарлака çулпа кайĕ. Ĕçлекенсен класĕ ирĕкпе сотсиалисăмшĕн кĕрешес ĕçре усă курĕ», тенĕ.

Мĕншĕн кĕрешнĕ 1905-мĕш çулта ĕçлекенсемпе хресђенсем? Мĕн кирлĕ пулнă вĕсене? Ђи малтанах ĕçлекенсем те, хресђенсем те ирĕке тухасшăн кĕрешнĕ. Ĕçлекенсем хăйсен йăвăр пурнăçне çăмăллатма, нушаран хăтăлма тăрăшнă. Хресђенсем çĕрсĕр аптăраса, темĕн ђухлĕ куланайсем тӳлесе асапланса пурăннă пирки кĕрешнĕ. Ĕçлекенсем ĕç кунне 8 сехете çитиђђен ђакарасшăн, ĕç хакне çын пек пурăнма çителĕклĕ тăвасшăн тăрăшнă. Хресђенсем улпут-хуçа çĕрĕсене хăйсене илесшĕн, темĕн ђухлĕ пысăк куланайсемпе налуксене пĕтересшĕн пулнă.

Вăл кĕрешӳ 1905-мĕш çулта çеç пуçланман. Ĕçлекенсем те, хресђенсем те нумайранпа кĕрешнĕ. 1905-мĕш çулта пурнăç ђăтма çук ытла хĕсĕнсе çитнипе вĕсем револђутси тапратнă. Револђутсине çав вăхăтра пулнă Йаппун вăрçи те çывăхартнă.

Йаппун вăрçи промышлĕннăç крисĕсĕпе пĕр вăхăтра пулнă. Çавăнпа ĕçлекенсем ĕçсĕр тăрса йулма пуçланă. Хĕвеланăç йенђи

кĕпĕрнесенђи мĕн пур ĕçлекенсенђен çурри ĕççĕр тăрса йулни те пулнă.

Вĕсем вара пăлханма пуçланă. Хресђенсем те пăлханкаланă, мĕншĕн тесен, вăрçă йăвăрлăхĕ кашни кунах йал пурнăçне нађарлатса, çĕмĕрсе пыђĕ.

Çав вăхăтра ессерсем хăйсен орканисатсине çирĕплетсе пынă. Ийунĕн 15-мĕшĕнђе 1904-ш çулта ессер Сасонăв патшалăхăн шалти ĕçне тăвакан вăйлă министăрне—Плевене, ирĕклĕхе тухасшăн тăракансене пусмăрлакана, вĕлерет.

Плеве хыççăн ларакан књаç Çветопполк-Мирский, липераллă пуршуаçисене „шанăç" панă; вĕсене шанăç панипе, вăл револђутси пăлхавне салатса йарасшăн пулнă.

Анђах çав вăхăтра пуршуаçи ђылай çирĕпленсĕ çитнĕскер, влаçа хăйсен аллине илесси çинђен шутланă. Ун ђухне влаç пуçĕнђе влаçа сирĕп тытма пултарайман творенсем пулнă пирки, пуршуаçи правиттĕлствăна хирĕç пыракансен «пуçлăхĕ» пулса, конститутси тăвасшăн пулнă. Парижре (Франтсире) «Освобождение» сойусĕн, сотсиал-револђутсионерсен парттин, Финђанти активĕсен, Пољшшă, Круçипе Армени натсиллĕ парттисен претставиттĕлĕсен

конферентсийĕ пухăннă. Вĕсем конститутсишĕн ирĕклĕхшĕн, халăхсене хăйсене ĕçлеме парасшăн кĕрешме пĕрлешес, тенĕ. Унтан Раççейри «Освобождение» сойусĕ çемствă оркани-сатсисемпе пĕрле сиессемпе панккетсен камппанине пуçласа йанă.

Унта револђутси майлă сăмахсем каласа ресоđутсисем йышăнса, правиттĕлствă йĕркине улăштармалла тесе, лапăртатнă.

Меншевиксем ĕçлекенсене липералсем майлă пулма ђĕнне. Полђшевиксем липераллă пуршуаçи ĕçлекенсене улталама пултарассине ĕçлекенсене кăтартса, ĕçлекенсене правиттĕлствăна хирĕç хăйсем тĕллĕн кĕрешме ђĕннĕ. Ку ĕç ђăнах та полђшевиксем каланă пек пулнине малашне куратпăр.

## Каппон ĕçĕ.

Еçлекенсем хушшинђе хăйсен нушисем çинђен тухса уççăн калас шухăш çирĕпленсех пынă. Çав шухăшпа йанвар уйăхĕнђе Питĕрти ĕçлекенсем пăлханнă. Ку пăлхав пуçламăшĕ пулнă. Ђасах вăл питĕ вăйланса пынă. Правиттĕлствă ку пăлхава пĕтерме шутласа çапла май тунă: Каппон йатлă пупа ђ ĕ н с е ĕçлекенсем

хушшинҫе Питӗрте „хапрӑк-савӑтра ӗҫлекенсен сойус“ опҫӑстви тума хушнӑ. 1904-мӗш ҫул пӗтес умӗн ун пек опҫӑствӑсем вун пӗр пулнӑ. Унта 8 пин ҫлен пулнӑ. Каппон ӗҫӗ мӗнле пынине политси ҫиновнӗкӗсем пӑхса тӑнӑ пулин те, сотсиал темократсем Каппон сопранийӗсене терӗс ҫул ҫине тӑратма тӑрӑшнӑ. Унта ӗҫлекенсен пурнӑҫӗ ҫинҫен вӑйлӑрах калаҫса, ӑна пропакантӑ вырӑнне тума тӑнӑ.

Ҫапла револҫутси йеннеле сулӑнтарма тӑрӑшнӑ. Ҫав опҫӑствӑра тӑнӑшӑн Путтилӑв савӑтӗнҫен тӑватӑ ӗҫлекене кӑларса йанӑ. Кӑларса йанӑ ӗҫлекенсене опҫӑствӑсен пухӑвӗсем кайалла илме хушнӑ. Савӑт атминистратсийӗ кӑна хирӗҫ нимле ответ та паман пирки, йанварӗн 3-мӗшӗнҫе Путтилӑв савӑтӗнҫе ӗҫлекенсем сапастовккӑ тапратаҫҫӗ. Ку савӑтра пӑлханнӑ хум ытти савӑтсене те ҫасах йарса илнӗ. Каппон ӑна курса ӗҫлекенсене патша патне кайса „тӗрӗслӗх“ ыйтма шут тыттарнӑ. Каппон, правиттӗлствӑна хирӗҫ пыракан ушкӑнсемпе канашласа ӗҫлекенсен петитсине*) халӑх ҫухӑнлӑхне пӗтересси ҫинҫен ҫырнӑ. Унта уҫретиттӗлни сопрани ҫинҫен те ыйтса ҫырнӑ.

*) Хут ҫине ҫырнӑ хӑйсен ыйтӑвӗ.



Патша патне пулӑшу ыйтма пыракансене патша пӑшалпа пеме хушнӑ.

Йанварĕн 9-мĕшĕнҏе патшана хăйсен нушин çинҏен каласа парса, ăна çăмăллатасси çинҏен ыйтма патша çурҏĕ патнелле кайнă. Вĕсене Каппон пуп йертсе пынă.

Анҏах правиттĕлствă, ырă кăмăлпа йышăнас вырăнне, пухăннă халăха ним уйамасăр пеме приккас панă. Приккаса пурнăçа кўртне.

Йанварĕн 9-мĕшĕнҏи йунлă мунҏа пĕтĕм ĕçхалăх ҏĕрине ыраттарнă, вĕсем вара „тĕнпе патша“ çине шанмалла маррине ҏухласа илнĕ. Ĕçлекенсем хăйсем ирĕке тухасси хăйсенҏен килнине тăнланнă.

Каппона шанма пăрахрĕç. Ĕçлекенсене улталанăшăн ăна 1906 ç. март уйăхĕнҏе ĕçлекенсем асаплантарса вĕлернĕ.

## Револҏутси хумĕ вăйлăланаҭ.

Йанварĕн 9-мĕшĕнҏе пулса иртне ĕçсем Раççейе хумхатмасăр хăварма пултарайман. Интелекентси хирĕçўллĕ сăмахсем каланă, студентсем тапранса кайнă, ĕçлекенсен сапастовккисем пуçланнă.

Ун пек сапастовккăсем Полҏшшăра, Капкасра, тата Палтти тинĕс таврашĕнҏе пулнă. Политсисемпе çапăçмасăр иртмен. Ҏукун çул çинҏе

ĕçлекенсем ĕçлеме пăрахса стаѓкăсем тунă. Стаѓкăсем: Мускав ѓукун çулĕ çинѓе, Варшавпа—Венă, тата ытти çĕрте те пулнă.

Февралпе март уйăхĕсенѓе хресѓенсен пысăк пăлхавĕсем пĕтĕм Раççейĕпех пулнă. Капкасра хресѓенсем хĕрлĕ йалавсемпе темонстратсисем тунă: патша йĕрки вырăнне респуплĕк тумалла, тенĕ. Ĕçлекенсем хушшинѓе сотсиал темократсем ăнлантарнă сăмахсем вăйлăлансах пынă. Сапастовккă тунă ĕçлекенсем хайсен пурнăçĕсене аванлатасси çинѓен çеç мар,— тата вĕсем политтĕк тĕлĕшĕпе те нумай ыйтнă. Пăлханакансем пур çĕрте те пысăк пухусем тунă. Çав пухăсенѓе патша йĕркине сирпĕтме, револѓутси ĕçĕсене хатĕрленме пуçланă. Сотсиалиссен партисем вăрттăн прокламатсисем, кĕнекесем, листовккăсем халăх хушшине кăларса йанă. Прокламатсисем халăх хушшинѓе хăйсен ĕçне тунă. Халăх револѓутси шухăшĕпе тулма тытăннă.

Питĕрти ĕçлекенсем, йанвар кунĕ иртнĕ хыççăн, ĕçлеме темиçе кун иртсен тин тытăннă пирки, правиттĕлствă ĕçлекенсене мĕн çитменине тата мĕншĕн пăлханнине пĕлесшĕн комиççи суйламалла тунă. Ку комиççине

ĕçлекенсем хушшинҌен претставиттĕл кĕмелле пулнӑ. АнҌах вӑл комиççине револҌутси хӑйех тасатнӑ.

## Правиттĕлствӑ ĕçлекенсене лӑплантарма шутлать.

Правиттĕлствӑ ĕçлекенсем хумханнине кура, уккас кӑларнӑ. Уккасра халӑхран çынсем суйласа вĕсене правиттĕлствӑ ĕçне йертмеллине кӑтартнӑ пулнӑ. Кӑна тума комиççи тунӑ. Комиççи пуçлӑхĕ министӑр Пулыкĕн пулнӑ. Кун пек туни тепĕр хут пӑлхава пусарса йани çеç пулнӑ. Çемски пухӑвĕсенҌе хула тумисенҌе интелекентсем уççӑн патшалӑх йĕркине улӑштарма проектсем тунӑ.

Март уйӑхĕнҌе „Ирĕке кӑларакан сойус" тейекенсен сиесĕ пулнӑ. Ку сиесра конçтитутси йышӑнасси çинҌен проект тунӑ. Тата çемствӑсен Мускавра ийулҌ уйӑхĕнҌе пухӑннӑ сиесĕнҌе конçтитутси йышӑнас пулсан, халӑхпа çывӑхрах ӳкĕтлесе сӳтсе йавмалла тенĕ.

Çав вӑхӑтра „Сойуссен Сойусĕ„ вунтӑват тĕсле интелекентси професçисене пĕтĕçтерсе тӑраканскер, пĕтĕм вӑйпа уҌретиттĕлни сопрани пухмалла, тесе восвани кӑларнӑ. Унтан

„Пĕтĕм Раççейри Хресђенсен Сойусĕ“ пуçланса кайнă; унта та пурте пĕр саспала: уђретиттĕлни сопрани пухмалла, тенĕ.

## Револђутси хумĕ хĕç-пăшаллă востани пулса кайаť.

Çуркуннепе çулла ĕçлекенсем хушшинђе пропакантă ĕçĕ малалла вăйланса пынă. Çĕнĕрен пăлхавсем пуçланса кайнă. Пăлхавсем ĕлĕкхи пек мар, вăйлăрах, пĕр сасăллă, хастарлăрах пулнă. Ĕçлекенсем хăйсем хушшинђе савăт хуçисемпе татăклă калаçма теппутатсем суйланă. Вырăнăн-вырăнăн ĕçлекенсем „Кивçен пулăшакан„ сойуссем уçнă.

Сапастовккă тăвакан ĕçлекенсем темĕн ђухлĕ нушасем: выçлăх, сивĕ, тата ыт. те курса тӳсмелле пулнă. Иваново Вознеççенскра, Лотçăра, тата Отессăра хĕç-пăшаллă востани пулса кайнă. Пăлханакан револђутсиллĕ ĕçлекенсемпе „Потемкин-Тавриђеский“ карап çинђи матруссем пĕрлешнĕ. Вĕсем атминистратси патне хулана тупăпа персе аркататпăр, тесĕ хăратса çыру çырнă. Вĕсем ун пек пăтраннине ђарнă. Хăранă атминистратсин аллиђен тухса ӳкне влаçа матруссем хăйсен аллине илсе çирĕплетеймен.

Çапла вара, Отессăри ĕçлекенсен хĕрӳллĕ пăлхавне, матруссем вăхăтĕнђе пулăшайманнипе тăшман (патша) çарĕ сӳнтерме тытăнат.

## Халăха лăплантарма тунă Тумăна пољшевиксем пойккот тăваççĕ.

1905 çулта Йаппун вăрçине ђарнă. Авкустăн 6-мĕшĕнђе Патшалăх Туми манифес кăларнă. Авкустăн 6-мĕшĕнђе Пулыкĕн кăларнă олошенипе никам та килĕшмен. Липераллă пуршуаçи Патшăлăх Тумине ђăн конçтитутсишĕн кĕрешме кĕмелле тенĕ. Ĕçлекенсене йертсе пыракан пољшевиксем, пролеттариата орканисатсилесе хăй тĕллĕн хĕç-пăшалпа самотершавине хирĕç тухмалла, тенĕ. Тата Пулыкĕн Тумине хирĕç тăрса, ăна ним вырăнне хурас мар тесе пойккот тунă. Пулас çапăçура пролеттари сойусĕнђе хресђен çеç пулмалла, пуршуаçи тавращĕ пулмалла мар, тенĕ пољшевиксем.

Авкустăн 27-мĕшĕнђе аслă шкулсенђе пысăк пухăсем тунă. Пур универçитетсен пысăк пӳлĕмсенђе те иртен пуçласа каçа çитиђђенех ĕçлекенсен клупĕ майлă пулса тăнă. Кусен ђи ирĕклĕ пухăсем пулнă. Универçитетсенђи

миттёнксем пăлханакан массăна револютсине йёртсе пыракан пуçлăхсемпе çывăхрах паллаштарса, револ͡ьутси лосăнкĕсене вырăна, лайăхрах пурнăçа кӳртме пулăшнă.

## Револ͡ьутсин ͡ьи пысăк вырăнĕ.

Мускаври Сыттинăн кĕнеке кăларакан çĕрте ĕçлекенсем çеньтапĕрен 19-мĕшĕн͡ье сапастовккă пуçланă.

Вăл ͡ьасах питĕ вăйланса кайнă. Пăлхавсем ытти ĕçлекенсем хушшин͡ье те пуçланса кайнă. Ĕçлекенсем ĕçлеме пăрахса пысăк пухăсем тунă.

Мускав ĕçлекенĕсем пăлханнă хуме Питĕре те куçнă. Çеньтапĕрĕн 30-мĕшĕн͡ье патшалăх ху͡ьĕсене (укçа) çапакан експетитсин͡ье ĕçлекенсен хушшин͡ье пăлхав пуçланă. Çавăн пекех Невски саставăра та пăлхавсем тапраннă.

Çав вăхăтра Питĕрте ͡ьукун çул çин͡ье ĕçлекенсен слушăш͡ьисен пенççи паракан кассăн уставне пăхса тухма сйес пухăннă. Ку пирвайхи телекатлă сйес пулнă.

Сйесра суйласа йанă çынсем çеç калаçма пултарнă. Октапĕрĕн 6—7-мĕшĕн͡ье Мускавпа Хусан ͡ьукун çулĕ çин͡ье ĕçлекенсем сапастовккă тунă. Ăна ир пуçланнă тесе пăшăрханнă



**Хăйсен** пурнăçне йусама ыйтнăшăн рапођђисене патша правиттелс. касаксем йарса хĕнеттерни.

сйес ђарма та шутланӑ, анђах сапастовккӑ вӑйлансах пынӑ.

Виç кун хушшинђе пӗтӗм Раççейри ђукун çулсене йарса илнӗ. Октапӗрӗн 16-мӗшӗ тӗлнелле пӗтӗм ӗçлекенсем ӗçлеме пӑрахнӑ пирки 40 пин çухрӑм тӑрӑш ђукун çул ним ӗçлемесӗр ђарӑнса тӑнӑ. Питӗрпе Мускавра пуçланса кайнӑ сапастовккӑсем пур хапрӑк-савӑтсене те йарса илнӗ.

Питӗрте сотсиал темократсем пӑлханакансем хушшинђе револютсиллӗ вӑйсене пухса, револютсиллӗ правиттӗлствӑ тумалла тесе вӗрентнӗ.

Октапӗрӗн 13-мӗшӗнђе ӗçлекенсен теппутађӗсен совеђӗ тунӑ. Октапӗрӗн 14-мӗшӗнђе пӑлханакан ӗçлекенсемпе интелекентсен профеççийӗ пӗтӗçнӗ, ытти пӗђӗкрех хуласенђе те сапастовккӑсем пулнӑ. Йекатеринославпа Харкковра парикатӑсем туса çапӑçни те пулнӑ. Правиттӗлствӑ ӗçлекенсене темӗн ђухлӗ персе вӗлерттернӗ. Çапах ку нимӗн те пулӑшман.

Октапӗрӗн 17-мӗшӗнђе самотершавине ирӗксем çинђен манифес кӑларма лекнӗ.

**Массӑ полъшевиксем хыççӑн кайат, меншевиксем такӑнтарасшӑн.**

Лонтӑнра пулнӑ сйес шутланӑ пекех, ӗçлекенсем револютсине хӑйсем тунӑ. Питӗрти

ĕçлекенсен теппутађĕсен Советне меншевиксем хăйсен çулĕпе йама шутланă, вĕсем парттире тăман массăран пулăшу тупасшăн шулнă. Анђах меншевиксен шухăшĕ ахалех йулнă. Совет влаçшăн кĕрешме пољшевиксен çулĕпе кайнă. Совет малтанах ĕçлекенсене политтĕк тĕлĕшĕнђен тума тытăннă ĕçсене тума çул кăтартса пынă.

Октăпĕрĕн 19-мĕшĕнђе Совет хаçат тавраш не ирĕклĕ çырас йĕркене пурнăçа кĕртме тăрăшнă.

Çав вăхăтра ђерносоттĕнтсăсем çĕмĕрсе çӳреме пуçлăнă. Вĕсенђен сыхланма Совет ĕçлекенĕсене хĕçпăшаллантарса хулара ĕçлекенсен милитсине тунă.

Револђутси ĕçĕнђе ĕçлекенсем çурма çулта ђарăнас çуккине пĕлсе, пуршуаçи ĕçлекенсене ђасах сутма пуçлаť. Револђутси ĕçĕшĕн ĕçлекенсем питĕ хытă кĕрешнĕ майĕпе, Совет ĕçлекенсем 8 сехет ĕçлемелли çинђен постановлени йышăннă. Çав вăхăтра Кронштатра матруссем пăлханнă. Правиттĕлствă матруссене полевой сута парасшăн пулнă. Совет пролеттариата пăлханакан матруссене пулăшма ђĕннĕ. Нойапĕрĕн 12-мĕшĕнђе сапастовккă тухнă, тесе

пĕлтернĕ. Сапастоккăн лосăнкĕсем çапла пулнă: „Асаплантарса вĕлерессе пĕттĕр“, „Пољшшăрл войеннăй полошени пĕттĕр, çавăн пекех пĕтĕм Раççейра та кирлĕ мар“, тенĕ.

Ку сапастовккăна липералсем пулăшман, вĕсем тайлăк çулпа шуçса анса патшапа пĕрле ĕçлеме тытăннă.

Совет ĕçлекенсене хĕçпăшалланма ђĕннĕ. Ĕçлекенсене лайăх орканисатсилесе монарххине хирĕç хĕçпăшалпа пĕтĕм Раççейĕпе тухас вăхăта хатĕрлерĕ.

Питĕрти Совет çине пĕтĕм Раççейри ĕçлекенсем хăйсен влаçĕ çине пăхнă пек пăхнă. Питĕрти Совет пĕтĕм Раççейри ĕçлекенсен правиттĕлстви пек пулса тăнă. Совет Питĕрте çеç мар, ытти çĕрте те ĕçленĕ.

Унпа пĕрлех Совет ĕçлекенсен пурнăçне аванлатас тĕлĕшпе те ĕçленĕ. Вăл профсойуссем тума пулăшнă, тата хресђенсемпе те „Хресђенсен Сойусĕ“ урлă пĕрлешсĕ тăнă.

## Револђутси хумĕ йала та çитет.

Капитталиссем çав вăхăтра савăтсене вăхăтлăха хупнă пирки, ĕççĕр йулнă ĕçлекенсем питĕ нумай пулнă. Капитталиссем ĕçлекенсене



Помещӗк ҫуртне-йӗрне саlатса тавӑрнакан хресӗен ушкӑнӗ.

тискер тăшман вырăнне хурса, урама кăларса пăрахнă пек кăларса пăрахнисем нумай пулнă. Çавăнпа ĕçсĕр йулнă ĕçлекенсем ђылайĕшĕ йалсене саланнă. Вĕсем хресђенсене хулари пăлхавсем çинђен, хулара ĕçлекенсем мĕншĕн кĕрешни çинђен тĕплĕрех пĕлтернĕ.

Октăпĕр уйĕхенђе пулса иртнĕ ĕçсем çинђен йалсем те пĕлнĕ. Нойапĕрте хресђенсем хушшинђе пăлхавсем пуçланса пур кĕпĕрнесене те сарăлнă. Сахал вăхăтрах икĕ пин ытларах улпутсем çурт-йĕрне çĕмĕрсе салатнă. Правиттĕлствă хресђенсем пăлханнине хирĕç караттĕлни експетитсисем йарса йун тăктарнă. Анђах çарта тăракансем те ĕçлекенсемпе хресђенсем мĕншĕн пăлханнине ăнлана пуçланă.

Çавăнпа йалти пăлхавсене лăплантарма çăмăлах пулман.

## Ĕçлекенсен тепутађĕсен совеђĕсене арĕслене.

Ĕçлекенсен тепутађĕсен совеђĕн Ĕçтăвакан комиттеђĕ нойапĕрĕн 22-мĕшĕнђе пĕтĕм ĕç халăх перекет кассисене хунă укçасене кайалла ылтăн укçапа илме хушнă. Кун пек тунипе самотершавин нађарланса çитнĕ укçатенкĕ йĕркине татах йапăхтарнă.

Правиттĕлства ăна хирĕç ĕçлекенсен тепутаҍĕсен совеҍĕн претçетаттĕлне Хрусталҍов Носсаре арĕсленĕ. Совет ун пек тунăшăн, хĕç-пăшаллă востани тумалла, тесе ресолҍутси йышăннă. Правиттĕлства ун хыççăн патшана хирĕç тата çĕр пирки хумханакансен пуçлăхĕсене арĕслеме приккас панă.

Ĕçлекенсен тепутаҍĕсен совеҍĕпе пĕрле сотсиал-темократсем, т. ыт. „Финанс манифесĕ“ кăларнă. Манифесра çаксене каланă пулнă: Патшлăха (правиттĕлствăна) памалла тӳлевсене памалла мар, тата патшалăх сайомĕсене йышăнмалла мар, перекет кассисемпе панккăсене хунă укçасене кайалла илмелле, тенĕ.

Финанс манифесне теккапĕрĕн 2-мĕшĕнҍе çапнă; тепĕр кунне ĕçлекенсен совеҍĕн претставиттĕлĕсене йăлтах арĕсленĕ. Вĕсем вырăнне Питĕрти пролеттариатсем совета çĕнĕрен суйланă. Вĕсем Мускав совеҍĕпе пĕрле пĕтĕм халăхпа стаҍкă тума вăйлăн хатĕрле пуçланă. Анҍах Питĕр пролеттариаҍĕ малтанхи çапăçупа, тата ĕççĕр йулса наҍарланнăскер, йулашки хут самотершавипе çапăçма кирлĕ таран вăй тупайман. Ун вырăнне Мускав ĕçлекенĕсем хĕç-пăшаллă востани тума хатĕрленнĕ.

## Мускав восстанийӗ.

Теккапӗрӗн 8-мӗшӗнђе пӗтӗм Мускавӗпех сапастовккӑсем пуҫланнӑ. Нумай халӑхлӑ миттӗнксем пулнӑ.

„Аквариум" театӑрӗнђи тата „Фитлӗр" йатлӑ шкулти миттӗнксене Мускав кенерал-кӗпӗрнатӑрӗ Тупассӑв хушнипе, тупӑпа пере пуҫланӑ, тата Страстной плошђӗтри ҫын ушкӑнӗсене пӑшалпа пере пуҫланӑ.

Вара Мускав кенерал-кӗпернаттӑрӗ Тупассӑв пролеттариата йун ӑшне путарасшӑн пулнине ӗҫлекенсем пӗлнӗ.

Ҫӗрле теккапӗрӗн 10-мӗшӗ умӗн Мускаври пољшевиксен парттин комиттеђӗ, револђутсишӗн тӑракан ытти орканисатсисемпе пӗрле ҫарпа политсине хирӗҫ ҫапӑҫмалла, тесе уҫҫӑн каланӑ. Вара хулара темиҫе вырӑнта парикатӑсем тунӑ. Политсисемпе ҫапӑҫма пуҫланӑ. Хулара хӑш районсенђе пастовккӑсене район совеђӗсем йертсе пынӑ. Револђутсионерсем-трушӗннӗксем ывӑна пуҫланӑ. Сав вӑхӑтра правиттӗлствӑ хӑйӗн вӑйне пухаť. Питӗрпе Мускав хушшинђи ђукун ҫул ҫинђе ун ђухне вӑйлӑ сапастовккӑ пулайман, ҫавӑнпа правиттӗлствӑ Питӗртен Ҫеменовский кварти

полкине Мускава йанă. Тата Мускав çывăхĕнђи карнисонсенђен вăй пухнă. Востани тăвакансен аллинђе пĕр Преçнă районĕ çеç йулнă. Унтан ăна та парăнтарнă. Ун ђухне 100 çын ытла вилнĕ. Раштав тĕлнелле ĕçлекенсен тата пољшевиксен парттин Мускаври комиттеђĕ малалла вăрçнинђен усă пулас çуккине кура, сапастовккăна ђарас тесе постановлени тунă. Унтан çеменовтсăсем Мускавпа Хусан ђукун çулĕ çинђе ĕçлесе пурнакансене тискер кайăксем пек çĕмĕрсе пĕтернĕ.

## Револђутсийе çĕнтернĕ.

Теккапĕр уйăхĕнђе пулса иртнĕ ĕçсем пур çĕре те сарăлнă. Пуринђен ытла Раççейăн кăнтăр йенђе: Новороççийскăра, Ростовра т. ытти çĕрте те востанисем пулнă. Ростовра ĕçлекенсене темиçе çĕршерĕн персе вĕлернĕ. Харккăвра, Сормăвăра сапастовккă вăхăтĕнђе малтанах ĕçлекенсем политсисемпе хĕç-пăшалпа çапăçса йун тăкнă.

Вăтам Атăл таврашĕнђи кĕпĕрнесенђе те теккапĕр востанийĕ вăхăтĕнђе пăлханмасăр йулман.

Раççей хĕррисенђе, пуринђен ытла Капкаспа Палтти тинĕс таврашĕнђе револђутси пăлхавĕ



Ирĕклĕхшĕн тăрăшакан йалти хресђенсене сут туса хĕртни.

ĕçлекенсем çумне хресђенсемпе патраксем пĕтĕçнĕ пирки питĕ вăйлă пулса иртнĕ. Правиттĕлствă пĕтĕм Раççейĕпех караттĕлни експетитсисем йанă. Револђутсиллĕ пăлхав тунă ĕçхалăхĕн йунĕ çырма пек йухнă. Сутсăр-мĕнсĕр пере-пере вĕлернĕ. Çар суђĕсем тем пек тискерĕн ĕçленĕ. Çав сутсем тем тĕрлĕ асапланмалла прикăвăрсем тунă.

Çиђĕ пине йахăн вĕлермелле тунă, темĕн темĕн ђухлĕ çынна арĕслесе тĕрмесене ссылккăна йанă. Ĕçлекенсен класĕн кĕрешĕвĕ кайарахпа хресђенсем çĕнтерейместĕрех пĕтнĕ. Пуринђен ытла ку хресђен массипе тĕплĕн пĕтĕçеймен пирки, çарсем хушшинђе револђутсиллĕ хумсем сахал пулнă пирки пулђĕ. Пуринђен ытла, ĕçлекенсемпе хресђенсем çак икĕ клас пĕрлешсе патшана хирĕç тухманнинђен килет.

Вăл револђутси ĕçлекенсене хĕçпăшаллă востани тума, советсем тавра пĕрлешме, малашне çĕнтерме вĕрентрĕ.

## 1905-мĕш çулти револђутси парттисен сăнĕ-сăпатне кăтартрĕ.

Пирĕн комуниссен парттийĕ револђутси çулĕ çинђе ĕçлекенсемпе хресђенсене пĕрлештерсе, пысăк йăвăрлăхсене çĕнтерсе Ленин кăтартнă

çулпа — сотсиалисăм çулĕпе пырса, влаçа хăй аллине илсе 9-мĕш çул тытса тăраť ĕнтĕ. Комуниссен парттийĕ хресђенсен ĕçĕ ĕçлекенсен ĕçĕнђен уйăрлманнине тĕплĕ курса тăнă. Хулара ĕçлекенсем капитталиссен пусмăрне ђăтса пурăннă. Йалта ђухăнпа вăтăм хресђенсем помешђĕксен ђури пулса, вĕсен ирсĕр ĕçĕсене тӳссе пурăннă. Пĕр сăмахпа каласан, ĕçлекен хулара нушаланнă, хресђен йалта тертленсе пурăннă. Патшапа помешђĕксем тата вĕсен йыттисем ђиновниксем мĕнсем ĕçхалăх сĕткенне ĕмсе пурăннă.

Влатимĕр Илйиђ Ленин пуринђен малтан хресђен пурнăçне ђухласа илсе, ĕçлекенсен класĕ револђутси тунă çĕрте, хресђенсем унăн йулташĕ пулса, патша правиттĕлствине хирĕç хĕçпăшаллă восстанине çапăçма тухасса малтанах курса тăнă.

Ленин йулташ ĕçлекенсемпе хресђенсем капиттала хирĕç пӳрте пĕр çын пек кар тăрса тухсан анђах Раççейри револђутси çийеле тухассине кăтартса, меншевиксемпе тавлашнă ђухне те нумай çырнă. Ленин йулташ çапла каланă:

Пирĕн Раççей хресђенĕ пек нађар пурăнăçпа,



Йалсенђе патшана хирĕç пыракан хресђенсене арĕслени.

йăварлăхра, мăшкăлра пурăнакан тĕнђер те çук пуљ. Хресђен çинђи пусмăрелăх мĕн ђухлĕ йавăртарах, çавăн ђухлĕ хресђенсем револютсиленсе, вăйлăрах çĕкленсе пыраççĕ. Револютсиллĕ пролеттариатăн хресђенсем револютсиллĕ вăйне сотсиалисăмла револютси ĕçне çирĕплетес çĕре йама пĕлмелле. Урăхла каласан, ĕçлекенсен класĕ умĕнђи хресђенсене çул кăтартса кăпитталисăм нушалăхĕнђен хăтălма пулăшса, сотсиалисăмлă пурнăçа йертсе кайас сатађ тăрат.

Меншевиксем пуршуйсен йеннелле сулăнса пынă. Вĕсем пуршуйсем вăхăт çитсен револютсине хирĕç кайассине сисмен. Пуршуйсем патша правиттĕлствине сирпĕтесшĕн пулман, вĕсем влаçа анђах патшапа хăйсен хушшинђе уйăрасшăн пулнă. Çакна меншевиксем курман вара.

Пирĕн витĕр курса тăракаџ польшевиксен парттийĕ револютси çулне лайăх курса тăнă. Польшевиксем ĕçлекенсем класĕн пуршуйсемпе пĕрлешмелле мар, ĕçлекенсен класĕн çыхăну хресђенсемпе анђах пулма пултарат тенĕ. Ку тĕрĕссине епĕр пурнăçра, хамăр куçпа куртăмăр, ăна Совет влаçĕ кăтартат.

Истори пире акă мĕн кăтартаť: ĕçлекенсем патшапа помешђĕксене çĕмĕреççĕ те влаç пуйансен, капитталиссен аллине лекет. Кун пек пирĕн пĕрремĕш револђутсире анђах мар, ытти патшалăхсенђи револђутсисенђе те çавăн пекех пулса пынă.

Çапла меншевиксем сăмахпа анђах револђутсине йышăннине, ĕçпе вĕсем пуршуйсен лакейĕсем выранĕнђе пулнине 1905-мĕш çулти револђутсире питĕ лайăх курăнђĕ.

Влатимĕр Илйиђ хăйĕн ĕмĕрĕ тăршĕпех çав суйа сотсиалиссемпе кĕрешнĕ, ĕçлекенсемпе хресђенсене вĕсем хыççăн кайасран ђарнă. Влатимĕр Илйиђ çав суйа сотсиалиссем умра курăнса тăракан тăшмансенђен те хăрушă тăшман иккĕнне пĕлсе, вăхăтăнђе вĕсен ирсĕр ĕçсене кăтартса пынă.

Малта ĕçлекенсемпе хресђенсен интересĕсем хуçайствă тĕлĕшĕнђен уйăрăлаççĕ пулсан та, нушалăхра, ћусмăрта пурăннипе вĕсен интересĕсем çыхăнаççĕ, терĕмĕр. Ĕçлекенсемпе хресђенсен çирĕп çыхăнăвĕ кирлине 1905 çулхи револђутси лайăх кăтартрĕ. Çак оппăт 1917 çулти револђутсире çĕнтерме пулăшрĕ. Совет влаçĕ 8 çул тытăнса тăни те ĕçлекенсемпе хресђенсен çирĕп çыхăнăвĕнђен килет.

## Тепӗр револютисъѣен.

1905-мӗш çулхи револютсийе пӗтерсе ларт-сан, тискер реакси пуçланат̆. Ӗçлекене тата хытăрах хӗстереççӗ, хресѣен выçăллă-тутăллă пурăнса тарăхат̆. Пурăнăç йапăхнă пирки, йал-тан тухса кайакан ѣухăнсем тӗрлӗ хапрăксене, савăтсене лекеççӗ, ӗçлекенсен ӗмӗѣӗсемпе, шухăшӗсемпе палашаççӗ. Хуларан тавăрăнсан вӗсем йалсене урăхла шухăшлаттарма тытă-наççӗ, тӗттӗм хресѣен тăнпуçне вăратаççӗ.

Унтан Çӗпӗрте, ѣукун çулпа пысăк хула-ран 2000 çухрăмра вăрман ăшӗнѣе 14 çул ӗлӗкрех калама çук тискер ӗç пулса иртнӗ.

Ленă шывӗ хӗрӗнѣи Потайпă йатлă ылтăн тупакан вырăна 1912-мӗш çулѣен сайра çын пӗлнӗ. Унти вырăспа акăлѣан кăпитталиссем-шӗн темӗн ѣухлӗ ețем хӗн-асап курса пурăн-нине пӗлекен те пулман. Ӗçлекенсене выçăллă-тутăллă пурăнмаллăх ӗçхакӗ тӳленӗ, таса мар касăрмасенѣе усранă; вӗсемпе вӗсен арăмӗсене мăшкăласа, нимрен те хăрамасăр пурăннă. Унти ӗçлекенсем кăпитталпа политсин ѣăн ѣурисе-мех пулнă.

Унтан тухса кайса хăтăлма та май пулман ӗçлекенсем пурте ылтăн хуçисене парăма кӗрсе

ӳкнӗ, парӑма татмасар йаман. Парӑмӗ кунтан кунах ӳссе пынӑ.

Мӗн пур вӑйа пухса кӗрешмесӗр ҫав ђуралӑхран хӑтӑлма май пулман. Ҫапла 1912-мӗш ҫулта, февраљ уйӑхӗнђе кӗрешӳ тапранса кайрӗ. Вӗсем хӑйсен пуҫлӑхӗсенђен пурӑнӑҫне йусама ыйтнӑ. Ҫав ыйтура мӗн пурӗ 13 пункт пулнӑ, вӗсенђен ђи паллисем: 1) 8 сехет ӗҫлесси, 2) ӗҫ хакне 30% хӑпартасси, 3) штравсене пӗтерессИ, 4) ӗҫлекенсене хӑйсен комиҫҫийӗсӗр вырӑнтан кӑлармалла марри, тата 5) пуҫлӑхсенђен ӗҫлекенсем йуратман 27 ҫынна кӑларса йама хушни пулнӑ. Хӑйсен ҫывӑхӗнђе хӗҫпӑшаллӑ охранӑ пулман пирки, пуҫлӑхӗсем Иркутскинђен хӗҫпӑшаллӑ ҫар ушкӑнне ђӗнтернӗ, хӑйсем ӗҫлекенсемпе ыйтни ҫинђен пуплеме ђӑсса тӑхтанӑ. Иркутскинђен вара шантар ротмистрӗ Терешђенкӑ салтаксемпе ылтӑн вырӑнне пынӑ; вӗсемпе пӗрле аслӑ пуҫлӑхсенђен проккурор пулнӑ. Ылтӑн вырӑнӗнђи пуҫлӑхсемпе пуплеме суйланӑ ӗҫлекенсене хупса лартнӑ. Акан 17-мӗшӗнђе хӑйсем суйласа йанӑ ҫынсене мӗншӗн хупни ҫинђен пуплеме ӗҫлекенсем Натештински тенӗ вырӑна кайнӑ. Ҫул ҫинђе вӑрманта вӗсене ылтӑн вырӑнђи

пуçлăхсемпе çав шантар ротмистри хирĕç кĕтсе илнĕ те, калаçнă хушăрах ĕçлекенсене пăшалпа пеме тапратнă. Унта 270 çынна вĕлернĕ, унтан та нумайрах амантнă. Ылтăна ĕçлекенсен йунĕпе шăварнă.

Анђах инçери пăшал сассисем Çĕпĕр тĕттĕм вăрманĕнђе анђах мар, пĕтĕм Раççейре йанраса кайрĕç. 1905-мĕш çулхи револђутси хыççăн ĕçлекенсемпе хресђенсен пур çĕрте те патша тӳрешари хытă хĕстерсе лартнă пирки, ĕçлекенсем пуççене ђиксе шăпланса тăнăђђĕ. Ленă патĕнђе вĕлерни пĕтĕм Раççейри ĕçлекенсене ура çине тăратрĕ. Питĕрти, Мускаври тата ыт. хуласенђи ĕçлекенсем пысăк сапастовккăсемпе тухрĕç. Вилнисен çемйисене укçа, апат-çимĕç, тумтир пухса пулăшрĕç.

Çавăн пек тискерлĕх ĕçлекенсене çĕнĕрен пĕрлештерме пулăшнă.

Полђшевиксен „Çăлтăр" йатлă хаçађĕ çинђе сапла çырнă: „Ленă çинђе вилнĕ ĕçлекенсене памĕтнĕк лартас пулсан пирĕн вырăс пролеттариађĕн çирĕппĕн пĕрлешсе, вăйсене тĕреклентерсе пĕр татăк-сыпăксăр йунлă мунђа пулмалла мар пурнăç тума хытă тăрăшас пулаť, çав памĕтнĕкрен ырри пулас çук", тенĕ.

Çав памĕтнĕк — патшапа пуршуйсен влаçне сирпĕтесси ђасах пулаймарĕ. Анђах Ленă йенђи пăшал сассисемпе вăраннă ĕçлекенсен station класĕ çитес вырăн йенелле пĕр ђăрăнмасăр утрĕ. Пилĕк çул иртсен ылтăна ĕçлекенсен йунĕпе çуса кăларакансем те, вĕсене сыхлакансем те сирпĕнђĕç. 1914-мĕш çулхи патша вăрçинђе ĕçлекенсемпе хресђенсем пĕр пĕринпе лайăх паллашса çитеççĕ, салтаксем пĕр ĕмĕтлĕ пулаççĕ.

## Комуниссен парттийĕ кĕрешӳре йертсе пыраť.

Аслă Октăпĕр револђутсийĕ сасартăк килсе çапăнмарĕ. Унăн кунçулĕ ђылай вăрăм; вăл пынă йĕр акăш-макăш йăвăр, асаплă. Унăн тĕп никесне Карл Маркăспа Фритрих Енкĕлс хывнă пулин те, кайран ăна йертсе пыракансем темиçе тĕрлĕ шухăшпа темиçе тĕрлĕ ушкăна уйăрăла-уйăрăла пынă. Сăмахран К. Маркс вĕрентнине Раççейре саракан — Плеххановăв малтанлăха пĕтĕм вăйпа кăпитталисăмпа кĕрешекенскер, йулашкинђен шалт кăпитталиссем майлă çавăрăнса ӳкрĕ. Пĕр В. И. Ленин çеç, Маркс вĕрентни тăрăх иккĕленмесĕр пырса,

ӑна пурӑнӑҫа кӗртрӗ. Пӗр вӑл ҫеҫ хурҫӑ пек ҫирӗп комуниссен парттине органисатсилесе, ӑна йертсе пырса пӗтӗм тӗнђе револђутсин пуҫламӑшне—Октӑпӗр револђутсине турӗ.

Комуниссен парттийӗ—Маркс вӗрентнӗ тӑрӑх пыракан пӗртен пӗр партти. Револђутси йухӑмӗнђе епӗр нумай парттисем пӗлетпӗр. Вӗсем тӗрлӗ шухӑшпа тӗрлӗ ӗмӗтпе ӗҫленӗ. Анђах сотсиалисӑмӑн тӗрӗс ҫулӗпе йертсе пыракан пӗрех, вӑл—комуниссен парттийӗ; йулашки пуҫлӑх, йулашки аслӑ револђутсионер В. И. Ленин пӑхса ҫитӗнтернӗ партти.

Вӑл партти темиҫе револђутси витӗр тухнӑ. Сӑмахран, 1905-мӗш ҫулах илер. Ун ђухнехи револђутси мӗншӗн пӗтсе ларнӑ, мӗншӗн ҫӗнтереймен?

1905-мӗш ҫулхи револђутси ӑнӑҫлӑ пулманни: 1) ӗҫлекенсемпе хресђенсен ҫирӗп сойус пулманнинђен, 2) липераллӑ вак пуршуйсем ӗҫхалӑхне сутнинђен, 3) йут патшалӑхри мул хуҫисем патша правиттӗлствине револђутсине сӳнтерме укҫа тенкӗ парса пулӑшнинђен— килђӗ.

Октӑпӗр револђутсиђђен пирӗн партти пытанса ӗҫленӗ. Анђах унта та вӑл 1905-мӗш

çулхи револ̧утсин йăнăшĕсене, вăл мĕн пирки çĕнтерейменнине лайăх тишкĕрсе, тĕпђесе вĕренсе пынă. Тата ĕçлекенсемпе хресђенсем пĕр ĕмĕтлĕленнине те, çарти шухăшсене те тĕплĕ сăнаса, аса илсе пынă.

## Февраљ револ̧утсийĕ.

Октăпĕр револ̧утси туса ирĕке ĕçлекенсемпе хресђенсен аллине париђђен тепĕр оппăт пулса иртрĕ, вăл — нарăс (февраљ) револ̧утсийĕ: патша вырăнне кăпитталиссем кĕрсе ларасçĕ, ĕçлекенсем кăпитталиссене патша тӳре-шарине сирпĕтме анђах пулăшнă пек пулса тăрат.

Раççейри ĕçлекенсен халăхĕ самотершавипе пит нумай вăхăт кĕрешнĕ, ăна хирĕç темиçе хут тапăннă, анђах кашни тапăнмассеренех патша правиттĕлстви ĕçлекенсене йун ăшне путарнă. 1917 çулта ĕçлекенсен класĕ, комуниссен парттийĕ кăтартнă тăрăх, ђухăн хресђенсенпе пĕрлешсе, вĕсемпе пĕр сăмахра пулса ирсĕр патша правиттĕлствине ĕмĕрлĕхе пĕтерсе пăрахрĕ.

Февраљ револ̧утсине тума вăрçă пулăшрĕ. Вăрçă вăхăтĕнђе Романăвсене (ăру йађĕпе) пуршуаçипе интелекентси пулăшсан та правит-

тĕлстван ĕ ç ĕ наҫарланнă çемĕн наҫарланса пынă. Романăвсене ĕçлекен халăх вăрçăҫҫен те шанман, вăрçă пуçласан вара, правиттĕлствă тарçисем патша министăрĕсем, кенералĕсем халăха сутни (Сухомлинăв, Месойетăв, т. ы. те) пурне те сисĕне пуçланă.

Пуршуаçине çĕнтерӳллĕ вăрçă кирлĕ пулнă, вăл йепле те пулсан халăха улталаса пĕр йенҫен Керманине çĕнтересшĕн, тепĕр йенҫен ĕçлекенсенпе хресҫенсен т и р н е нумайрах сĕвесшĕн тăрăшнă, анҫах, тата çакăнтах вăл ĕçлекен халăх р е в о љ у т с и тăвассинҫен пит хăранă, çавăнпа вăл „патша хăй вăл аван, ăна тĕрлĕ усал çынсем (Распутин) пеккисем пăсаççĕ“ тесе халăха йăпатасшăн пулнă, анҫах пуршуаçи мĕн каласан та, ĕçлекен халăх, вĕсем суйеçтернине сиссе, вĕсен сăмахне шанмасăр правиттĕлствăпа кăна мар, пуршуаçипе хăйпе те кĕрешме пăрахман.

Вăрçă вăрăма кайнă пирки халăх хуçайстви наҫарланнă çемĕн наҫарланса пынă, тавар хакĕ ӳссе пынă, çавăнпа вара Раççей халăхĕ çав нушана пĕтересси çинҫен, çав нушаран тухасси çинҫен шухăшла пуçлат.

Пуршуаçи тата тепĕр хут ĕçлекен халăха

хăй йенне çавăрма хăтланнă, анђах, халăх, комуниссен парттийĕ йертсе, çул кăтартса пынипе патша правиттĕлствине сирпĕтме хатĕрлене пуçланă. Самотершавине хирĕç пыракансен ĕређĕ кашни кунах нумайланнă çемĕн нумайланса пынă, револђутси шухăшĕ хулара ĕçлекенсем хушшинђе кăна мар хресђенсем хушшинђе те сарăлнă çемĕн сарăлса, ўссе пынă. Патша правиттĕлстви, револђутси çывхарса килнине сиссе, ăна ĕлĕкхи пек йун ăшне пытарма хатĕрлене пуçланă: страшниксемпе, кăртувуйсенђен тĕрлĕ отретсем туса вĕсене пулеметпе пеме вĕрентме пуçланă. Правиттĕлствă пунт (пĕђĕк пăлхав) пулаť, тесе шухăшланă. Ĕçлекенсем тĕреклĕ, пĕр пĕрне хаваслантарса, револђутси тума хатĕрленнĕ. „Пăлхав" пуçланса кайнă куна кивĕ çтилпе февралĕн 23 ђислине шутлама пулаť. Çав кун (тĕрлĕ претприйаттисенђе) 87.534 пролеттари сапастоваť тунă. Пĕр хускалсан вара сапастовкă ўснĕ çемĕн ўссе пынă: февралĕн 24-мĕшĕнђе 197,000 çынна çитнĕ, тепĕр кунне февралĕн 25-мĕшĕнђе 240,000 çын, каçпа çав кунах Выпорк районĕ (ĕçлекенсен районĕ) ĕçлекенсен аллине ўкет. 26-мĕшĕнђе пăлхав

татах вăйлăрах сарăлат̆. Тепĕр кунне каçпа 5 сехетре правиттĕлствăн аллинђе пĕр кротонађаљствăпа атмиралтействă анђах йулат̆.

Ĕçлекенсен ушкăнĕсем револ̧утси йуррисем йурласа „Патшапа патша правитĕлстви пăрахăç пултăр!“ тесе урамсенђе кăшкăрса çӳренĕ. Ĕçлекенсене хирĕç правиттĕлствă çар тăратнă, анђах ун ђухнехи салтаксем 1905 çулхи пек пулман, салтаксем иккĕлĕ шухăшла пуçланă; вĕсем ĕçлекенсем тĕрĕсшĕн кĕрешнине сиссе вĕсен йенне çавăрăна пуçланă.

Çав вăхăтра пол̧ьшевиксен Питĕрти орканисатсийĕ (Тĕп Комиттетпа Питĕрти Комиттет пӳровĕ) пурне те патшапа кĕрешме ђĕнсе Питĕрти пăлхава пĕтĕм Раççейе сарма тăрăшнă. 28-мĕш ђислара пол̧ьшевиксен Тĕп Комиттет йађĕпе револ̧утсиллĕ правиттĕлствă тăвасси çинђен манифес кăларнă. Çапла ĕнтĕ пол̧ьшевиксем ровол̧утсийе малалла йани, ăна йертсе пыни револ̧утсин малтанхи кунĕнђен паларнă,

Анђах меншевиксемпе ессерсем револ̧утсийе йертсе пыма мар, ăна ђарса гăнă. Вĕсем Совета кĕрсенех ĕçлекенсемпе хресђенсене ултама тытăннă, вĕсем çул кăтартса пыма мар, массăран хăраса пуршуаçи майлă ĕçле пуçланă.

Пуршуаҫи револютси пуҫлансанах ёҫлекенсемпе хресҭенсене пётерсе лартма тăрăшнă, мёншён тесен, вăл вăхăтра пётём вăй ёҫлекенсемпе хресҭенсенҭе пулнă.

Халăха лăплантарас тесе, пуршуаҫи Микулай патшана улăштарса унăн шăлнёне лартасшăн тăрăшнă, анҭах ёҫлекен халăх патша лартас тесен йахăна та килмен. Микулайа „ўкёттеме“ Ротҫанкăпа Шитловски халăха систермесёр, вăрттăн, ун патне кайма тытăннă, анҭах ёҫлекенсемпе салтаксем теппутаҭёсен Соveҭё вăхăтёнҭе ун ҫинҭен сиссе ăна ҭарнă. Ҫапла вара пуршуаҫйн правиттёлствăпа пёрлешсе, ёҫлекенсене пётерес тенё шухăшё пётсе ларнă, правиттёлствă пётнё хыҫҫăн ёҫлекенсене хирёҫ пуршуаҫи хăй пёҭҭен тăрса йулнă.

27-мёш ҭыслара, влаҫа хăйсен аллине илес тесе, пуршуаҫи патшалăх тумин ёҫ тăвакан комиттет туса лартаҭ. Ҫакна вёсем револютсине пулăшас шухăшпа мар, ăна шала кайасран хăраса ҭарма, май пулсан пётерсе лартма туса хунă.

Ҫавăнпа пёр вăхăтрах ёҫлекенсемпе салтаксем те 1905-мёш ҫулхи майлă хăйсен правиттёлствă — Совет суйласа хураҫҫё. Пирвайхи кун-

сенђех Совет револђутсийе хӑй аллине илсе, ӑна тӗрӗс ҫулпа йӗртсе пыма тӑрӑшаť.

Пирвайхи ларӑвӗнђех (27-мӗш ђислара Совет Раҫҫей халӑхӗпе Питӗр халӑхне ђӗнсе восвани кӑлараť.

Ҫав восванире, халӑха револђутси йепле пуҫланни ҫинђен кӑна мар, тата ӑна сыхлас тесен мӗн тумаллине те, ӑна йепле ҫулпа илсе каймаллине те аван ӑнлантарса панӑ. Ҫав ларурах Советӑн Ӗҫтӑвакан Комиттетне суйласа лартнӑ.

Патшалӑх тумин вӑхӑтлӑх комиттеђӗ тавра пуршуаҫипе интелекентси пухӑна пуҫланнӑ, тепӗр йенђен ӗҫлекенсен теппутађӗсен Советђӗ тавра ӗҫлекенсемпе салтаксем пухӑна пуҫланӑ.

Вӑхӑтлӑх комиттет револђутсийе хӑй аллине илсе, пӗтерсе лартма шухӑшланине сиссе, ӗҫлекенсен тепутађӗсен Советђӗ комиттета вӑл ӗҫе тума паман. Иккӗш икӗ тӗрлӗ шухӑшланипе вӗсем хушшинђе кӗрешӳ ӳснӗҫем ӳссе, вӑйлӑланса пынӑ. Вӑй ҫарта иккенне сиссе пуршуаҫи салтаксене хӑй аллине ҫавӑрма тӑрӑшнӑ, анђах вӑл вӑхӑтра Совета меншевиксен сӑмахне (пӑхмасӑр), итлемесӗр Совета салтаксен теппутађӗсене кӗртсе ҫара хӑй аллине илнӗ.

Ёҫлекенсен малтан хӑйсен тӑшманӗсемпе хӑйсен йулташӗсене уйӑрса илеймен пирки, Совета пирвай соклашшаттӗлсем (пуршуаҫипе килӗшекенсем) кӗрсе ларнӑ. Вӗсем револютсиллӗ сӑмахсем, лосунксем каласа, ёҫлекенсене улталаса „хӑвӑр алӑра влаҫа илме ан шухӑшлӑр“ тесе ҫарса тӑнӑ.

Ҫавӑн пирки мартӑн 2-мӗшӗнҫе влаҫ пуршуаҫи аллине кӗрсе ӳкнӗ: вӗсем хӑйсен хушшинҫен суйласа Вӑхӑтлӑх Правиттӗлствӑ лартнӑ.

Сакӑр уйӑх хушши (феврал револютсинҫен октапӗр револютсине ҫитиҫҫен пуршуаҫипе пролеттариат влаҫшӑн кӗрешнӗ.

Вӑхӑтлӑх Правиттӗлствӑ Учреititтӗлни Сопранийе кайа хӑварса пынӑ, пуйансене налоксем хумасӑр тӑнӑ, вӑрҫӑ йывӑрлӑхне ёҫлекенсен ёнси ҫине тийенӗ, „сойуҫниксем“ хушнипе вӑл салтаксене фронта йарса пулкки-пулккипе пӗтерттернӗ, 8 сехетлӗ кун ыйтакан ёҫлекенсене хирӗҫ салтаксене тӑратнӑ, улпутсенименисене илекен хресҫенсене тӗрмене тыта-тыта хуптарнӑ, ёҫлекенсемпе салтаксене хирӗҫтерсе револютси вӑйне пӗтерме тӑрӑшнӑ. Комуниссен парттийӗ револютсине пӗтерме паман, вӑл револютсин малтанхи кунӗнҫех

„Вăрçă пăрахăç пултăр! пĕтĕм влаç Советсене!“ тесе массăна лосунк пăрахаť. Çак лосунксене çав тери йывăр пулсан та пĕр иккеленмесĕр, пĕр ђакмасăр, пурăнăçра вырăна кӳртсе тăђĕ. Малашне пољшевиксен парттийĕпе пролеттари çав 8 уйăх хушшинђе мĕнле йывăрлăхсем курса хăйсен ĕçне, сотсиалисăм ĕçне малалла шутарнине пăхăпăр.

## Февраљпе Окťапĕр хушшинђе виçĕ кри-çĕс куратпăр.

1. Февраљ револјутсийĕ. Ку влаç криçĕсĕ,— ку хире-хирĕç тăрса влаçшăн, тавлашакан классен çапăçăвĕ. Малťанхи пĕррĕмĕш криçĕс хыççăн помешђĕксен влаçĕ, советсем, Сталин йул. сăмаххипе—пролеттариатпа вак пуршуа çи интересĕсемшĕн претставиттĕл пулакан-нисем пулăшнипе, вăйлă пуршуаçи аллине кĕрсе ӳкет.

Епĕр ĕç халăхĕ кăпиттал пусмăрлăхĕ айĕнђен тухасшăн йепле хайарăн çапăçнине питех те аван астуса тăратпăр. Тата ĕçлекенсемпе хрес-ђенсем револјутсиллĕ пăлхавсем тапратса йани-не те пайанхи пекех астăватпăр. Револјутсиллĕ пăлхавсем Керенски правиттĕлствине сирпĕтсе

йараҫҫен нумайах малтан тапранман; пролеттариатпа хресҫенсем капитталпа хире-хирӗç тытӑçса кайаҫҫен нумай малтан тапранман. Çак пӑлхавсенҫе пролеттариатӑн темиçе хутҫен те май тухайман, ҫакмалла пулнӑ, çапах та çак пӑлхавсенҫе пролеттариат револҫутсиллӗ оппӑтсене вӗреннӗ. Хӑй пуçланӑ ӗçне, вӗçне çитиҫҫенех туса пынӑ. Февралҫӑн 14-мӗшӗнҫе Петрократ урамӗсенҫе револҫутсиллӗ кӗрешӳ вӗрет. Салтаксем политсипе хире-хирӗç пырса перӗнсенех, револҫутсиллӗ халӑх йенне çавӑрӑнса ӳкеççӗ. Крышшӑсем çине пулеметсемпе хӑпарса ларнӑ коротовойсене çавӑрса илсе, хӗç пӑшалне туртса илет, йе пере-пере вӗлерет.

Петрократа револҫутсине пӗтерсе лартма илсе пынӑ çар наҫалҫствӑна итлеме пӑрахаҭ. Микулай патша хӑраса ӳкнипе мартӑн 3-мӗшӗнҫе вырӑнтан тухаҭ, хӑй вырӑнне Михаил йатлӑ шӑлнӗне параҭ. Анҫах Михаил та ҫӗтресе ларакан трон çине ларма хӑраҭ. Патша йӗрки тӗп пулаҭ.

Липералсемпе империалисӑмлӑ пуршуаçи хӑй хушшинҫен „Вӑхӑтлӑх Правиттӗлствӑна“ пуçласа йаракан ҫерносоттӗнсемпе катетсен Тумӑ Комиттетне уйӑрса хураҭ. Револҫутсиллӗ

темократсем Ĕçлекенсен (кайарахпа салтаксен те) Тепутаҍĕсен Совеҭĕнҍе пĕрлешсе тăраççĕ.

Саккунсем пуршуаçи аллинҍе пулнă пулсан та, влаç Совегсен йенҍе пулнă, мĕншĕн тесен, Советсем хыççăн ĕçлекенсен класĕпе хресҍенсем пынă. Анҍах ун ҍухне хăйсен сатаҍҍисене пĕлеймен ĕçлекенсемпе хресҍенсем Совеҍĕсенҍе сотсиал-килĕшекенсем нумай пулнипе, — влаçа тытса тăма пуршуаçи аллине панă. Вăхăтлăх Правиттĕлствăра йут патшалăхсемпе ĕç туса тăракан министерствăна Милюков кĕрет, çар министăрĕ Мускаври хуçа Куҍков пулса тăрат. Вара унта пысăк фаприкант, вăлах пиршевик Коновалов, сахăр çинтикат пуçлăхĕ Терешҍенко, акрарипе (çĕр ĕçĕпе) маçтăр çын Лҍвов кнеç, тата ытти çавнашкал хăйамат та пĕр правиттĕлствăна кĕрсе пĕтеççĕ. Вак пуршуаçи майлă сотсиалист Керенски правиттĕлствă пуçлăхĕ пулса тăрат. Кунта вĕсем ессерсемпе сотсиал-темократсен ĕçтăвкомĕн постановленийĕсене хирĕç тăраççĕ.

Влаçа хăй аллине илнĕ пуршуаçи сирпĕтсе панă монархине влаç кутне каллех илсе пырасси çинҍен шухăшне хăй пуçĕнҍен ҍасах пăрахман. Вăл Михаил Романовиҍа патшана

лартасси ҫинђен нумай калаҫнă, анђах калаҫни усăллă пулман. Вăхăтлăх Правиттĕлствăн Советсемпе килĕшмелле пулнă. Вара Советсен текларатсийĕ нуҫласа Тумăра ҫапăнаť. Вăл текларатси ҫинђе амниҫти ҫинђен, сăмах, пиђет тата ыт. ирĕк пулмалли ҫинђен. Уђретиттĕлни Сопранине хăвăртрах пухасси ҫинђен, тата хăйне хăй тытăнса тăракан ҫар ҫинђен те пулнă. Ҫак хушăрах тата текларатси ҫĕр ĕҫлекенсен саккунĕ, тата патшалăх йĕрки ҫинђен нимĕн те шарламан. Анђах ђи хăрушă ыйту— вăрҫă ҫинђен. Вара кунта Вăхăтлăх Правиттĕлствă, мĕн йурлани питех те палăраť. Вăхăтлă Правиттĕлствă тулти политтĕкпа сойуҫнĕксен патша мĕнле опесаттĕлствă панă, ҫав опесаттĕствăсене тытса тăма сăмах параť.

Виҫ ҫул хушши вăрҫăпа сўсленнĕ салтаксем миршĕн вăрҫа пĕтересшĕн ҫуннă. Куна пире фронтри салтаксем „тăшмансемпе“ тăванланни кăтартаť.

Анђах ҫавăн ђухнех тата апрелĕн 18-мĕшĕнђе Миљукков уйрăм ноттăпа сойуҫнĕксен правиттĕлствисене ҫапла пĕлтерет: „Раҫҫей халиђђенхи пекех „тăшмансене“ парăнтарађђенех ҫапăҫаť“, тет.

Миљукков ноттине хирĕç ĕçлекенсемпе салтаксен масси сиксе тăрат̆. Апрелĕн 20—21-мĕшĕсенђе Питĕрте, Мускавра т. ыт. пысăк хуласенђе Вăхăтлăх Правиттĕлствăна хирĕç пысăк темонстратсисем пулса иртеççĕ. Хĕç-пăшалланнă ĕçлекнсемпе салтаксем Вăхăтлăх Правиттĕлствăна хĕстерме тытăнаççĕ.

## Иккĕмĕш криçĕс.

Апрелĕн 18-мĕшĕнђе столитсă хула урамĕнђе револђутсишĕн кĕрешекен халăх туп-тулли пулнă. Çав кунах Миљукковăн остăвкăна тух̆малла пулнă; ун хыççăнах, тата, çар ĕçне тăвакан Кућков министр та тухрĕ. Вăхăтлăх Правиттĕлствă, вара, пĕтсе ларђĕ. Сотсиал-килĕшекенсем вилĕмрен хăраса пуршуаçипе пĕрлешрĕç. Çакнашкал, майăн 3—5-мĕшсенђе темиçе партти пĕрле (кунта комунисла партти кĕмен) çыхăнса коалитсиллĕ правиттĕлствă туса лартрĕç. Ку правиттĕлствăна ессерсенђен, меншевиксенђен тата ыттисенђен те преставиттĕлсем кĕнĕ.

Апрел уйăхĕнђе пулнă полђшевиксен конферентси (Ленин й. йут патшалăхран килсе ку конферентсире пулнă) ђухăн хресђенпе

вăрçăра асапланакан салтаксем пулăшсан — пĕтĕм влаçа пролеттари аллине илсе памалла, тесе сăмах татнă. Конферентси, вара нимрен малтанхи сатаҁ: халăх хушшинҁе акитатси урлă совет влаçĕ çинҁен ăнлантармалли пултăр, тенĕ „Совет влаçĕ сывă пӳлтăр!" тенĕ лосунк халăх хушшине саланнă.

Вăхăтлăх Правиттĕлстви çак вăхăтрах сотсиал-килĕшекенсем пулăшнипе, сойуçнĕксене ыр пулас тесе револҁутсишĕн тăрăшакан ĕçлекенпе хресҁене хирĕç, унпа кĕрешме хатĕр тăнă.

## Виççĕмĕш криçĕс пуçланни.

Ийуҥ уйăхĕнҁе уçăлнă Пĕтĕм Раççей Советсен Сиесĕ: Вăхăтлăх Правиттĕлстăна пулăшса тăрăпăр, тенĕ. Кайран ийунĕн 18-мĕшĕнҁе Питĕрте пухăннă сиес — Вăхăтлăх Правиттĕлствăпа вăрçса, ессерсемпе меншевиксен сиесне хирĕç тăрса темонстратси тунă, полҁшевиксем пĕтĕм халăх çинҁе çийеле тухнине кăтартса паҁĕ. Сав кунах Керенски хăй вăрçипе Калитсине пĕтерес тесе кайнă çĕртех тарса пытанҁĕ. Катетсем, хăйсен ĕçĕ тухманнине курса, малтанах хăраса ийулĕн 1-мĕшĕнҁе каçхине правиттĕлствăран тухрĕç.



Керенски правиттĕлстви хĕç-пăшалсăр урама тухнă темонстратсине пăшалпа пертерсе салатни

Иулён 3—5-мёшсенђе хулари салтаксемпе ёçлекенсем урама тухса: „Пётём влаç Совет аллинђе пултăр!“ тенине курса, Вăхăтлăх Правиттёлствăн политтёкки хăй тёлленех, саланса кайа пуçларё. Пољшевиксем, ку темонстратсийе вăрçăсăрах, пёрпёрне вёлермесёрех иртерес, тесе шутланăђё; анђах правиттёлствăпа сотсиал-килёшекенсен тёп комиттеђё фронтран тёттём салтаксемпе касаксене ђёнсе пырса, темонстратси тăвакансене тискер кайăксем пек тулласа хуђёç.

Воинăв йатлă ёçлекене „Правда“ хаçата халăх хушшинђе салатса çӳренёшён касаксем асаплантарса вёлернё. Пољшевиксен орканисатсисене, тата вёсен ретаксисене çёмёрме тапратнă, тата ытти майсемпе револђутсишён кёрешнине пётересшён тăрăшнă. Сут ёçё министрё Переверçёв пољшевиксем çинђен суйа сăмахсем сара пуçланă.

Çак вăхăтра Раççейре 3-мёш коалитси пулса, унăн министăр-претçетаттёлё Керенски пулса тăрат.

### Кётнё вăхăт çитет.

Коммуниссен Парттин 6-мёш сйесё ытла вăрттăн хăраса пытанса лармасăрах иртнё. Ку

сйесра нимрен ытла вăрçă çинђен, политтĕкпа економиккă çинђен тата уђретиттĕлнăй пухусемпе профсойуссем çинђен сўтсе-йавнă.

Вăрçă çинђен: ĕçлекен влаçне çийеле кăларас тесен, йепле пулсан та вăрçа ђармалла, тесе ресођутси йышăннă. Политтĕк йĕркипе: контр-ревођутсипе кĕрешмешкĕн малтан йертсе пыраканни комунисла партти пулмалла. Ĕçлекен клас, хăй тиктаттурĕ пултăр тесен, хресђене йалти ђухăнсене пуршуйсен правиттĕлствинђен уйăрса илсе вĕсемпе килĕштерсе ĕçлемелле. Ку таранђен çĕнтерсе илнĕ Совет влаçне вăйлăлатмалла. Ăна тума вăй сахалгарах пулсан ытти ревођутсишĕн кĕрешекен орканисатсисене хамăрпа пĕрлештерсе пуршуйсене çĕнтермелле тунă.

Сйес ку вăхăта — ревођутсине хирĕç тăракан пуршуйсен хĕпĕртемелли вăхăт, мĕншĕн тесен, вĕсене ессер парттипе меншевиксем ревођутсине путарасшăн пулăшса тăраççĕ, тенĕ. Çĕнĕрен тепĕр хут хастарлă тăрса ревођутси тусан тин советсене ђăн ĕçхалăх влаçĕ тума пултарăпăр, тенĕ. Йулашкинђен сйес: ĕçлекен класĕн пулас çĕнтерўвĕ нумайах йулмарĕ, ку çĕнтерў йепле пулсан та пулатех, тесе шанђăклă сăмах каласа хуђĕ.



Хĕрлĕ квартейтсăсем автомопил синқен тăшмансемпе çапăçаççĕ.

Ку вăхăтра Керенскин ђерносотеннăй правиттĕлствин политтĕкĕ Мускава мĕн пур хирĕç тăракан парттисене совешђанине пухнине курсан, пирĕн комуниссен парттине ĕçлекен класĕ пушшех йуратрĕ. Вара унăн вăйĕ те çирĕпленни курăнђĕ.

Çенťапĕрте Питĕрти советăн сотсиал-килĕшекенсен преçитиумне тепĕр хут суйламалла пулнă. Çĕнĕ преçитиум пуçлăхне Троцкий й. суйланă. Кунашкал правиттĕлствăн вилĕмĕ кунран-кун çывхарма пуçланă. Сотсиал-килĕшекенсем тем пек хирĕç тăнă пулсан та, полђшевиксем Пĕтĕм Раççейри Советсен 2-мĕш Сйесне окťапĕрĕн 25-мĕшĕ тĕлнелле иртермелле тунă.

Окťапăр револђутси тапрансанах меншевиксемпе ессерсем ќомуниссем çинђен тĕрлĕ суйа елексем сара пуçларĕç. Пире шалтан та, тул йенђен те тăшман хупăрласа илнĕђђĕ. Анђах ĕçлекенсемпе хресђенсем ђасрах лăпкă пурăнăçпа хăйсен хуçайствине çирĕплетес тесе, кар тăрсах пĕтĕм тăшмансене çĕмĕрсе тăкрĕç. Влаç ĕçхалăхĕ аллинђе çирĕппĕн тăђĕ.

Патша вăрçипе краштăн вăрçи пирĕн хуçайствă халне питрех те çапса хуçрĕ: хапрăк-савăт

ђарънђѐ, çул-йѐр йухънђѐ, йалхуçайстви ишѐлсе анђѐ. Вăрçăллă комунисăмпа пурăнма май килменни курăнђѐ; мѐншѐн тесен, пуринђен ытла, хресђен хуçайствине тѐреклетме йăвăр пулђѐ.

Çакна пурне те асăрхаса, 1921-мѐш çулта Ленин йулташ еккономи çѐнѐ политтѐкѐ кирлѐтет. Çавăнтан вара пирѐн ирѐклѐ суту-илў (НЕП) пуçланса кайаť.

Ак ѐнтѐ 5 çул епѐр еккономи çѐнѐ политтѐкѐпе пурăнатпăр. Ку вăхăтра пирѐн кѐретех промышлѐннăç та, йалхуçайстви те, ытти те çирѐпленсе, ураланса тăђѐ. Пирѐн ССР Сойусѐн хуçайствă халне тѐплѐ пѐлме таçти-таçти йут патшалăхри ѐçлекенсем киле-киле кайаççѐ. Епѐр вѐсен умѐнђе нимѐн те пытармастпăр. Хамăр тѐреке те, туса çитерейменнине те кăтартатпăр. Йут патшалăхри ѐçлекенсене хăйсен пуршуаçийѐ тем тѐрлѐ пирѐн пата йарасшăн мар тăрăшаť, пирѐн çинђен тѐрлѐ намăссăр суйа сăмахсем сараť. Анђах лешсем çапах пѐр вѐçѐмсѐр кунталла, ирѐклѐ респуплѐксен сойусне лле туртăнаççѐ.

Йулашкинђен епѐ çакна каласшăн.

Комуниссен парттийѐ комунисăмăн аслă

уђиттĕлĕсем Карл Маркспа Ф. Енкелс вĕрентнине, Раççейре пролеттари тиктаттури туса, пурнăçа кӳртрĕ. Комуниссен парттийĕ пĕтĕм тĕнђене ĕçлекенсемпе хресђенсем хăйсен патшалăхне тытса тăма, тума пултарнине кăтатрĕ.

Пролеттариллĕ револђутси тунă комуниссен парттийĕ пĕтĕм тĕнђипе те пĕрре анђах, вăл Раççейри комуниссен парттийĕ. Раççейри комуниссен парттийĕ тĕнђен ултăмĕш пайĕнђе пролеттариллĕ револђутси туса пĕтĕм тĕнђери ĕçхалăх куçĕ умĕнђен Карл Каутскийсем*) тата ытти кăпитталиссен хӳрисем вĕрентнин тĕтрине сирсе йађĕ. Вăл пролеттарисене, сотсиалисăма алăра хĕç-пăшалпа хĕрӳллĕ кĕрешсе, влаçа ĕçлекенсемпе хресђенсем хăйсен аллине илсен анђах тума пулассине ĕнентерђĕ. Примерсем илмешкĕн епĕр инçех каймăпăр. Меншевиксемпе ессерсен вĕрентнине пăђах лапђăтса лартакан пример вăл Анклири, Мактоналђт ђухнехи, ĕçлекенсен правиттĕлстви. Анклири ĕçлекенсен парттийĕ влаç патне револђутсисĕ-

*) Керманири сотсиал-темократсен, тата иккĕмĕш интернатсионалăн паллă теореттикĕ. Раççейпе Керманинђе револђутси пулнă вăхăтра, совета хурласа, парламентарисăмпа килĕштерсе—ăна мухтанă. Халђ те çавнашкалах пуршуаçи тарçи пулса, рапођђисене улталаса пурăнать.

рех, ҫӑмӑллӑн пыҭӗ, ҫавӑнпа ҫапла ҫӑмӑллӑнах вӑл правиттӗлстварӑн та сирпӗнҭӗ.

Куна, Анклири ӗҫлекенсен парттийӗ правиттӗлствӑра мӗншӗн тытӑнса тарайманнине пирӗн лайӑх ӑнланмалла. Алӑ ҫӗкленипе кӑпитталисӑм йӗркине пӗтерме ҫук. Анклири ӗҫлекенсен парттийӗ правиттӗлствӑна хӑй аллине пуршуйсен кӑмӑлӗпе илнӗ. Вӑл кӑпитталиссен власне тӗреклетсе тӑракан: тӗрме, политси, ҫар, хӗҫпӑшал пӗтӗмпех кӑпитталиссен аллинҭех пулнӑ. Анклири ӗҫлекенсен правиттӗлстви вӑл ӗҫлекенсен власӗ пулман, вӑл капитталиссен власӗ ҫийӗнҭи ҫӗтӗк кипке анҭах пулнӑ.

Пире Ленин йулташ ӗҫлекенсен класӗ власа хӑйсен аллине хӗҫ-пӑшаллӑ восстани туса анҭах илме пултарать, тесе вӗрентнӗ. Ӗҫхалӑхӗ влас патне ытти майсемпе пыни вӑл пушӑ вырӑн ҫеҫ. Сотсиалисӑма влаҫ ӗҫхалӑхӗ аллинҭе пулсан анҭах тума пулать. Хаљ епӗр куна хӗвел анӑҫӗнҭи ӗҫлекенсемпе хресҭенсем те ӑнласа иле пуҫланине куратпӑр.

Пайан та епӗр, йулташсем, Октапӗр револютсин 9-мӗш ҫулне куҫса тӳрех калатпӑр: Ирӗклӗ Респуплӗксен Сойусӗн хуҫайствине ҫирӗплетер; пирӗн хуҫайствӑ халӗ Мактонаљт,

Ђемперлен таврашсен хитре суйа сăмахĕсенђен пин хут вăйлăрах пулĕ. II-мĕш Интернатсионалăн намăссăрĕсене епĕр патшалăха тытма, хамăра тĕреклĕлетме пултарнине кăтартар.

Ирĕкри ĕçхалăхĕн вăйхалне сăнама çуллен (кăçал çеç мар) йут патшалăхри ĕççыннисем килсе пурăнса кайĕç. Епĕр вĕсене кăтартмаллах, мĕншĕн тесен, вĕсем пиртен тĕнђе револђутсине тума вĕренеççĕ.

# ТУПМАЛЛИ.


*Стр.*

Умсăмах . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Хресђенсен револђутсиђђенхи пурнăçĕ. 5
Ĕçлекенсен пурнăçĕ . . . . . . . . . . 6
Ĕçлекенсемпе хресђенсен тăшманĕсем. 7
Каппон ĕçĕ . . . . . . . . . . . . . . . 11
Револђутси хумĕ вăйлăланать . . . . . . 14
Правиттĕлствă ĕçлекенсене лăплантарма шутлать . . . . . . . . . . . 16
Револђутси хумĕ хĕç-пăшаллă востани пулса кайать . . . . . . . . . . . . 17
Халăха лăплантарма тунă Тумăна полђшевиксем пойккот тăваççĕ . . . 18
Револђутсин ђи пысăк вырăнĕ . . . . . 19
Массă полђшевиксем хыççăн кайать, меншевиксем такăнтарасшăн . . 21
Револђутси хумĕ йала та çитет . . . . . 23
Ĕçлекенсен тепутађĕсен совеђĕсене арĕсленĕ. . . . . . . . . . . . . . 25
Мускав востанийĕ . . . . . . . . . . . 27

*Стр.*

Револютсийе ҫĕнтернĕ . . . . . . . . . . 28
1905-мĕш ҫулти револютси парттисен сăнĕ-сăпатне кăтартрĕ . . . . . . 30
Тепĕр револютсиҫҫен . . . . . . . . . . 35
Комуниссен парттийĕ кĕрешӳре йертсе пыраĭ. . . . . . . . . . . . . 38
Феврал револютсийĕ . . . . . . . . . . 40
Февралпе октăпĕр хушшинҫе виҫĕ криҫĕс куратпăр . . . . . . . . . 47
Иккĕмĕш криҫĕс . . . . . . . . . . . . 51
Виҫҫĕмĕш криҫĕс пуҫланни . . . . . . . 52
Кĕтнĕ вăхăт ҫитет . . . . . . . . . . . . 54

Хакĕ 15 пус.